**Николай ИСМУКОВ**

# Ура хуҫса лараҫҫӗ ват тусем

### ЛАШТРА ЙӐМРА

*Кукаҫине – Илья Филиппова асӑнса.*

Лаштра кӑна йӑмра, лаштра йӑмра
Ӳсетчӗ ӗлӗк пирӗн урамра.
Саркайӑксем ларатчӗҫ ун ҫине,
Саркаланса юрлатчӗҫ юррине.

Ҫулла, хӗвеллӗ шӑрӑх кунсенче
Выляттӑмӑрччӗ ун сулхӑнӗнче,
Хӗлле ҫил чарӑнатчӗ те унта
Хуллен мӗн пуплешетчӗ-ши унпа?..

Ай, тӗк тӑмасть тӗнче, ай, тӗк тӑмасть.
Йӑмра шӑпи хальччен асран тухмасть:
Е кӗвӗҫтернӗ вӑл кӗлмӗҫсене,
Е тарӑхтарнӑ вӑл тиексене? –

Тӗпрен касса антарчӗҫ те ӑна
Сыпӑласа ӑсатрӗҫ хулана.
Ҫулҫисене пӑрахрӗҫ йыт айне,
Юррисене хӗстерчӗҫ хул айне.

Урам илемӗ пӗттӗр терӗҫ пуль,
Йӑмра йӑхне ан пултӑр терӗҫ пуль, –
Тапта-тапта пытарчӗҫ вуллине
Ял тулашне, Ҫӑл Атӑк хӗррине.

Йӑмра вырӑнӗнче халь тунката
Пӑсса хӑварнӑ ҫурт пек, тупата.
Ҫил чарӑнса тӑмасть унта текех,
Ҫул ҫаврӑнса кӗмест унта текех.

Эй, ырӑ ҫут ҫанталӑкӑм, тавах, –
Никам та мар – эс тивӗҫ мухтава:
Тапта-тапта пытарнӑ турата
Эс чӗрӗлӗх вӑйне паратӑн та

Кӗлле кӗрсе пиллетӗн кун ҫути,
Каллех ҫӗклетӗн пӗлӗте ҫити.
Ҫук вӗчӗхӳ санра, ҫук кӗвӗҫӳ,
Ыр тӑвасси ҫынна – мӗнпур ӗҫӳ.

Тавах, тавах! Паян ял хӗрринче
Вире енчен вӗрен ҫил хумӗнче
Кашлаҫҫӗ кӑрнатир пек йӑмрисем –
Хура ҫӗрпе шур пӗлӗт ачисем.

Ут утланса-ши иртрӗ утмӑл ҫул? –
Утса-чупсах кӗскелчӗ утма ҫул.
Анчах паян кунччен те асӑмра
Лаштра кӑна йӑмра, лаштра йӑмра...

* * *

Унччен тӗнче тенийӗ пурпӗрехчӗ –
Е ӗҫлӗ кунсенче, е канура.
Кунта иккен, кунта тӗнче рехечӗ –
Сӳнми хӗвеллӗ Бельдианӑра.

Кам кураймасӑр: "Тухӑҫ вӑл кӑварлӑ,
Кӑварлӑ та ҫаплах каварлӑ", – тет?!
Эп пӗлтӗр ҫакӑнта манса хӑварнӑ
Аса илӳ мана хальччен кӗтет.

"Пӗрле пурӑннине, ай, мӗн ҫитейӗ", –
Тесе юрлаҫҫӗ мар-и ваттисем.
Ав, турӑксем кальян туртаҫҫӗ тейӗн,
Ура хуҫса лараҫҫӗ ват тусем.

Туйӑпала ҫӳл пальма ылмӑш-ылмӑш
Килӗштерсе ӳсеҫҫӗ кар тӑрса.
Сенкер-сенкер тӳпе, июньлӗ сывлӑш
Сӑпка ачи сывланӑ пек таса.

Вӑтаҫӗр тинӗсӗ ытла тӑварлӑ –
Кӑвак шӑрҫа ӳксен те путас ҫук.

Çыран çине сикен хумсем тăварнă
шур лашасем пек урăх чупас çук.

Хура шăлаварпа шыва кĕреççĕ
Ытла сăпайлă турăк хĕрĕсем.
Хура акăшсене ас илтереççĕ
Каç умĕн тинĕсе ансан вĕсем.

Мăсăльмансен хăйсен йăлийĕ-тĕнĕ,
Хур майлă, шур тĕпеклĕ минарет.
Исмук йăхне Аллах сыхлатăр тенĕн,
Мулла азан* анаслăн ĕнĕрет.

Тĕнче илемĕ такама та çитĕ,
Пин çын пăхса тăрсан та иксĕлмест.
Апла тĕнче уйăрмалли виçе те
Влаçра ларакансен валли эллес?**

Ман пĕлтĕрех калас сăмахăм пурччĕ,
Манса кайман эп, туршăн та, ăна:
Тавах сана тараватушăн, Турци,
Кăштах уçăлтарнишĕн ăс-тăна.

* * *
Сире эп кăшт кутамасрах тесеччĕ,
Тăваткăл питлĕ турăк хĕрĕсем.
Сире эп кăшт чăваш пекрех тесеччĕ,
Мăсăльманланнă Турă хĕрĕсем.

Ак Турци çĕрĕ – Магомет савашĕ!
Бахчисарай пирĕштисем асрах.
Эсир, чăнах та, хамăр кас чăвашĕн
Вăталăх хĕрĕ пек кутамасрах.

Ачаранпах авса ĕçлеттермешкĕн,
Калхус пулман-çке сирĕн таврара,
Апла чикан майри пек чи ÿсмешкĕн
Сире мĕн чăрмантарнă-ши вара?

Ытла та çывăх маншăн Тухăç енĕ –
Джафар эс каснă-лартнă турăк тет.
Ав Исмаэл*** ячĕпеле çĕкленĕ
Отель умне эрешлĕ парапет.

Çак çĕр çинче тĕнче пуçараканĕ
Эпир, эпир пулман-и чи малтан?
Тюрк юнĕ – иксĕлми çăлкуçăн танĕ
Пирте тапса тăман-и авалтан?

Тен çавăнпа пĕрпеклĕх эп шыратăп
Пĕлсе тăрсах пĕрпеклĕх çуккине.
Танлаштарма çукрах çак ташăра та
Курасшăн эп чăвашăн "линккине"****

Историк сăмахне ĕненмелле-ши,
Е ĕненес ман юн йыхăрнине…
Рехмет, Джафар, мана кĕтсе илнишĕн,
Мана – тюрк йăхĕн сумлă хăнине.

* * *
Çурхи юлашки юр та ирĕлчĕ ĕнтĕ,
Кĕтетĕп Тур панă таса Калăма.
Эп килĕп, савни, эс мана кĕтмесен те
Хальччен каламан сăмаха калама.

Эп килĕп, савни, урамри симĕс курăк
Карта хĕррипе ешерсе тухиччен.
Сана унччен Беатриче пек курăп –
Кăштах аскăнрах та, çапах та пĕччен.

Эп килĕп, савниçĕм, чĕркĕмĕл пек сывлăм
Сырлан çеçкине сырăнсан йĕркипе.
Пĕрре ăнсăртран сан ятпа çырнă сăввăм
Хура манăçа тухиччен ерипе.

Эп килĕп, савни, пирвайхи юр ÿксессĕн,
Тăман пек асса асилÿ хускалсан.
Çаплах унччен пек илемлĕ-ши эсĕ,
Çаплах тутусем тутлă-тутлă-ши сан?

*Азан – кĕлле чĕнни
** «Эллес» – иккĕленĕве пĕлтерет
***Турцире хăна çурчĕсене, театр керменĕсене Исмаэл ятне пани тăтăшах тĕл пулать
****Чăваш ташши

Çур иртрĕ, çу иртрĕ, кĕр иртрĕ – халь ĕнтĕ
Хапха умĕнчи тĕлĕкре те эс çук.
Пĕрех эпĕ килĕп кĕтсен-кĕтмесен те
Шур юр таврана хупласан килес çул.

Умра шурă кăкшăм, чĕтрет олеандр,
Пуçа çавăрать сыпкăм-сыпкăм симпыл.
Мана эс, савни, нихăçан та савман-тăр,
Тен эп те сана юратсах юратман-тăр, –
Калас сăмаха халь калам-и? – Сыв пул!

**ТУНСĂХ СĂВВИ**
(Элеги)
Чуна çӳçентерет синкер шăпаллă
Пĕччен тăрна – кăрлик-кăрлик сасси.
Мĕн пуласси йăлтах, тăванăм,
паллă:
Çак çутă тĕнчерен уйрăласси.

Малашĕ мар, иртни халь маншăн ĕнчĕ,
Аса илӳ тĕнчи халь ман тĕнче.
Куçăмсене хупсан ăна та ĕнтĕ
Курăймăп иртнисен ĕретĕнче.

Пĕр çавăншăн кăна эп ӳкĕнетĕп:
Мĕн-ма васканă çитмĕле çитме!
Мĕн-ма чун каниччен савман-ши тетĕп
Хитре хĕрсемлĕ Ишлĕпе Шетме.

Ватта юлсассăн кам кăштах йӳтемĕ,
Кам тухмĕ прахăça шăлсем пĕтсен?
Кама эп кирлĕ халь? Пĕр-пĕр йӳтемĕш
Юррăмсенче те эп пĕччен, пĕччен…

Çапах йăлт пушанман-ха кивĕ енчĕк.
Унта пĕр сум анчах та пурпĕрех
Мĕн сутнине илсе пĕтереймен тĕк,
Калла ахаль пама та иртерех.

Ман пĕчĕк пахчари çав тĕмĕн-тĕмĕн
Тĕкме çумне тĕреннĕ хризантема
Çаплах хĕмленнĕ пек кĕр сиввинче

Пурнатăп-ха, çул хисепне пĕлсен те,
Пурнатăп-ха, çук пуласса сиссен те
Пĕччен тăрнан синкерлĕ кĕввинче.

* * *

Ĕç хыççăн кăшт кăна канса илмешкĕн
Эп килтĕм савнă Катраçа паян.
Тăхта "тавсси" тесен "тавах" темешкĕн –
Тăрук ĕçсен ӳсĕрĕлсе каян.

Тавралăхăм – тăраниччен пăхмалăх,
Çич чӳречеллĕ çуртăм – куç тулли.
Пĕр хĕрринче тăрайтăр тĕрлĕ халăх
Хĕвĕшекен шур Шупашкар хули.

Пĕрре ахтур хĕрхӳ, тепре ытармăш
Ачалăха асилӳпе кĕрен
Хĕвел шевлиллĕ сарă хĕвелçаврăш
Тухса илет мана калинккерен.

Хăйне манер хитре пахча каçкӳлĕм,
Тĕкĕлтура мăраннăн вĕçкелет.
Кунта мĕнле кăна чечек çук пулĕ! –
Ячĕсене пĕр арăм çеç пĕлет.

Хальхи культура шайĕпе виçеллĕ
Умра ӳсет пулсан та виноград
Пахча талккăшĕпех кăвак çеçкеллĕ
Улма тăварлă тунсăх вăратать.

Вирьял çыннийĕ тараватлă, лăпкă.
Кĕмĕлпе мар вăл – кăмăлпа пуян.
Катраçăн сывлăшне ĕç сыпкăм-сыпкăм,
Тăрук ĕçсен – ӳсĕрĕлсе каян.